Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

52 (7583) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи июлĕн (утă) 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Симĕс ĕç çи маршручĕсемпе

Уяр кунпа туллин усă кураççĕ

«Çумăрлă кунсенчи кашни уяр çанталăк ял çыннишĕн пысăк парне. Тулăх хĕлĕн инкĕсне паян хываççĕ-çке вĕсем. Кунта вара пурте пĕр тĕллевлĕ пулнине нимĕн те çитмест. Çак шухăшпа чĕртетĕп те ĕнтĕ куллен хама шанса панă трактора», –терĕ кĕске калаçура хăйĕн харпăрлăхĕнчи тракторпа, косилкăпа, утă тавăрмалли механикăлла кĕреплепе, пресс-подборщикпа Ятманта пурăнакансен 60 сотка çĕрĕсем çинчен ял çыннисене утă çулма тата пуçтарса кĕртме пулăшакан А. Максимов кашни çыннăн ыйтăвне туллин тивĕçтерме тăрăшса. Унпа юнашар ана çинчен вара пĕрисем типнĕ утăна алăпах «Газель» автомашина çине тиесе тухрĕç. Тепĕр пусăра вара шкул ачисем

хăйсем ашшĕ-амăшĕшĕн пысăк тĕкĕ пулнине кăтартса паккусри утăна тавăраççĕ. Çапла çав, ут çи пурне те пĕр чăмăра пĕрлештерет **(сăн ӳкерчĕксенче).**

Пĕрлехи вăйпа тата тăрăшулăхпа июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем нумай çул ӳсекен куракане 3025 гектар (28 процент) çулнă та 1608 тонна (17 процент) утă, 1637 тонна (18 процент) сенаж, 6239 тонна (17 процент) силос хатĕрленĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем «Восток», «Герой», Ильич яч. хис., «Оринино», «Свобода», Суворов яч. хис., «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче кал-кал пыраççĕ. «Сеятель» хуçалăх вара планпа 100 тонна утă янтăлама пăхнă пулсан, ĕçе 105 процент пурнăçланă.

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Мĕн çинчен калаççĕ цифрăсем?

Пĕтĕмпех йĕркеллĕ теме çук

Районти 16 ял тăрăхĕн территорийĕнче 177 ял шутланать. Ял хуçалăх предприятийĕсем 25 тата промышленноçпа продукци тирпейлекен предприятисем 15, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 67. Районта 19 автобус маршручĕ йĕркеленĕ, унсăр пуçне 17 маршрутпа пассажирсене уйрăм предпринимательсем илсе çÿреççĕ. Çынсен уйрăм харпăрлăхĕнче çăмăл автомашинăсем 3281, груз турттармалли автомашинăсем 803, тракторсем 413. Пĕтĕмпе 36,9 пин çын пурăнать. Вĕсенчен ĕçлеме пултаракансем 18140 çын, садике çÿрекен ачасем 1275, шкулта вĕренекенсем 4420, пенсионерсем 10196 çын.

ДЕМОГРАФИ

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 176 ача çуралнă. Иртнĕ çул вара 202 ача çуралнăччĕ. Вилекенсем 307 çын пулнă (иртнĕ çул 340).

ПРОМЫШЛЕННОСТЬ

Кăçал январь–июнь уйăхĕсенче районĕпе пĕтĕмпе 828762,8 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Унччен-хи çулхипе танлаштарсан ку вăл 168,5 процент пулать. Вăл шутран промышленность тата продукци тирпейлекен предприятисен тÿпи 656678,1 пин тенкĕпе танлашать (190,2 процент). Промышленность предприятийĕсенчен пĕри те кăтартусене иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен чакарса яман. Чи ăнăçлă ĕçлекенсен шутĕнче вара Муркашри кирпĕч заводне (221,2 процент), Муркашри сĕт-çу заводне (239,7 процент), «Сеспель» предприятие (215,1 процент), Муркашри издательство çуртне (140,1 процент), «Моргауши–Хлеб» обществăна (147,7 процент), «Сундырь–-Хлеб» обществăна (132,6 процент) асăнмалла. Районĕпе туса кăларнă пĕтĕм продукци шутĕнче «Сеспель» предприяти тÿпи 451163 пин тенкĕпе танлашать.

ТУПĂШСЕМ

Çулталăк пуçланнăранпа пĕтĕмĕшле 40307,1 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Иртнĕ çул ку кăтарту 36002,2 пин тенкĕпе танлашнă е тупăш илесси 12 процент ӳснĕ. Ял тăрăхĕсен бюджет тупăшĕ 7536,5 пин тенкĕ е 189,8 процент.

ТÿЛЕВЛĔ ПУЛĂШУ

Пĕтĕмпе 28455,6 пин тенкĕлĕх тÿлевлĕ пулăшу панă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан ку вăл 109,8 процент пулать. Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ 6468,8 пин тенкĕлĕх тÿлевлĕ пулăшу панă. 2007 çулхипе танлаштарсан ку вăл 106,2 процент пулать. «Моргаширайгаз» филиалĕпе «Моргаушрайбыт» общество вара иртнĕ çулхи шайра ĕçленĕ.

ВАККĂН ТАВАР СУТАССИ

Ваккăн тавар сутассин шайĕ 276110,5 пин тенкĕпе (132,5 процент) танлашнă. Мăн Сĕнтĕр районĕпе ку кăтарту 130,9 процентпа, Муркаш районĕпе 138,2 процентпа, ытти предприятисем тĕлĕшпе 121,3 процентпа танлашать.

ОБЩЕСТВĂЛЛА АПАТЛАНУ

Обществăлла апатлану калăпăшĕ 29938 пин тенкĕ чухлĕ (128,3 процент). Мăн Сĕнтĕр районĕпе вăл 17448 пин тенкĕ (133,9 процент), Муркаш районĕпе 12091 пин тенкĕ (130,9 процент).

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕССИ

Пĕтĕмпе 3478,7 тонна (иртнĕ çул 3061,8 тонна е 113,6 процент) аш-какай туса илнĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсем аш-какай туса илессине 6 процент, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 39,1 процент чакарнă. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче кăна вăл 30,7 процент ӳснĕ, 2221,8 тоннăпа танлашнă.

Сĕт 23951,5 тонна туса илнĕ (100,2 процент). Ял хуçалăх предприятийĕсенче 83,6 процент, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 27,5 процент кăна сунă. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче – 18345,6 тонна е 107,3 процент. Кашни ĕнерен вăтамран сĕт 1237 килограмм (иртнĕ çул 1281 килограмм) сунă.

Самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсем 525 грамм (93,1 процент), сыснасем 333 грамм (106,4 процент) ӳт хушнă, пĕтĕмпе 1378 (80,3 процент) пăру, 8235 (68,9 процент) çура илнĕ.

Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне районĕпе ашкакай 55,2 центнер (113,6 процент), вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 27,9 центнер (94,9 процент), сĕт 380,1 центнер (100,2 процент), вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 128 центнер (84,6 процент) туса илнĕ.

Мăйракаллă шултра выльăхсем 19168 пуç (91,9 процент), вăл шутран ĕнесем 10643 пуç (91,8 процент), сыснасем 17682 пуç (70,1 процент), сурăхсемпе качакасем 11485 пуç (104,4 процент), чăх-чĕп 284,3 пин пуç (103,3 процент), лашасем 287 пуç (61,9 процент) шутланаççĕ.

ПРОДУКЦИ СУТĂН ИЛЕССИ

2008 çулхи январь–июнь уйăхĕсенче 2736 тонна (138,1 процент) сĕт сутăн илнĕ. Муркаш (155 процент) тата Мăн Сĕнтĕр (129,7 процент) районĕсем ку енĕпе ăнăçлă ĕçленĕ. Çав вăхăтрах аш-какай сутăн илесси пирки çакна калама çук. Муркаш районĕпе вăл 16,8 тоннăпа (79,2 процент), Мăн Сĕнтĕр районĕпе 23,2 тоннăпа (69,3 процент) танлашать. Уйрăм предпринимательсем вара 485 тонна (115,5 процент) ашкакай сутăн илнĕ.

СТРОИТЕЛЬСТВО

Строительствăна пĕтĕмпе 182154,3 пин тенкĕ инвестицисем хывнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан вăл 113,7 процент пулать. Пурăнмалли çурт-йĕр 175562 пин тенкĕлĕх (124,4 процент), вăл шутран уйрăм çынсен çуртйĕрне 159510 пин тенкĕлĕх (126,8 процент) ĕçе кĕртнĕ.

Çĕнĕрен çулсем 2,1 километр (201,9 процент) тунă, юсав ĕçĕсене 4,3 километр (215 процент) туса ирттернĕ.

ĔÇ РЫНОКĔ

Ĕçсĕррисен шучĕ 41 çын чухлĕ ӳснĕ, 104 çынпа танлашать. Ĕçсĕрлĕх шайĕ 0,48 процент. Иртнĕ çул 0,3 процент пулнă.

Э. СИМАКОВА,
район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.

Райадминистрацире

Ĕçре хастар пулнăшăн

Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсен канашĕсем тата Ленин яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерсе район администрацийĕн пуçлăхĕн июлĕн 14-мĕшĕнчи 426 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерсе тĕлĕшпе нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Надежда Юрьевна ВАСИЛЬЕВАНА**, Мăн Сĕнтĕр райповĕн правленийĕн председательне;

– **Алевтина Васильевна ЕФРЕМОВАНА**, Муркаш райповĕн «Радуга» кафе буфетчицине;

– **Валериян Сергеевич ИВАНОВА**, Мăн Сĕнтĕр райповĕн правленийĕн председателĕн çумне;

– **Людмила Димитриевна ПЕТРОВАНА**, Муркаш райповĕн Исетерккăри куллен кирлĕ таварсен магазинĕн сутуçине.

2. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Галина Никандровна ГЕРАСИМОВАНА**, Ленин яч. хис. хуçалăх рабочине;

– **Валентина Михайловна РЕПИНАНА**, Ленин яч. хис. хуçалăхăн уй-хир бригадин управляющине.

Ĕç хăрушсăрлăхĕ малти вырăна тухать

Техникăран хăрама пăрахрăмăр-и?

Паян ӳсĕмлĕ ĕçлеме малта пыракан технологисене алла илсе техникăпа ăнăçлă ĕçлени малти вырăна тухрĕ. Çакна кашниех пĕлетпĕр, анчах пĕлнипе тивĕçлипе хĕç-пăшалланмастпăр, хăрушсăрлăх техники пирки манса каятпăр. Кайран вара чавса çывăх та – çыртма çук.

Ял çынни çуллахи чи ăшă кунсене çитес хĕл валли выльăх апачĕ хатĕрлессипе ирттерет. Анчах хĕрӳ ĕçре тесе хăрушсăрлăх правилисене иккĕмĕш вырăна хăварни часчасах хăй пирки аса илтерет. Малашлăха пăхакансем хĕрӳ ĕç çире урă пуçпах инкек тӳсни... Кун хыçĕнче вĕсем хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăхăнманни малти вырăна тухать. Çакăн çинчен калаççĕ те ĕнтĕ юлашки вăхăтра район территоринче утă хатĕрлекенсемпе пулса иртнĕ инкексем. Кăçалхи ут çире республикăра пĕтĕмпе 5 инкек пулчĕ, 3 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Инкексенчен 3-шĕ пирĕн районта пулни, вĕсенчен пĕринче çын вилни Муркашсене самаях шухăшлаттарма кирлĕ тесе шутлатăп.

Малтанах çакна каламалла. Çанталăк лайăххине курса ял çыннисем тахçанах ĕçлемен тракторсене те ĕçе кăлараççĕ. Ĕçе тухакан техникăн малтан техосмотр тăрса ĕçе кайма патшалăх техника надзорĕн ĕçченĕсенчен ирĕк илмелле, тракторсемпе агрегатсен ĕçлекен пайĕсене (сăнчăрсене, ременьсене, кардансене тата ытти çаврăнакан пайсене) хÿтĕлев виткĕчĕсемпе картламалла, техникăна пушар хăрушсăрлăх правилисемпе килĕшÿллĕн ĕçе хатĕрлемелле. Ĕçленĕ чух та ытти агрегатсене хăват паракан вала тата двигателе ĕçлеме чармасăр юсас тĕллевпе ĕçлекен агрегат патне кĕрсе кайма юрамасть.

Июнĕн 23-мĕшĕ. Кĕрекаç ялĕнче кил хуçи утă çулма кĕнĕ уйрăм харпăрлăхра трактор тытакан тракториста трактор умĕнче хăйĕн лаптăкĕн чиккине кăтартса пынă чух чылай ĕçленипе кивелнĕ КРН-2,1 косилкăн çĕççи хăйне çирĕплетнĕ вырăнтан тухса кайса кил хуçине йывăр амантать. Кунта çакна каласа хăвармалла. Ĕçлекен косилка патне 30 метр радиусран çывăха пыма юрамасть. Ку тĕслĕхре техника юсавсăр пулни те куç умĕнчех.

Июлĕн 8-мĕшĕ. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мăн Тутаркасра уйрăм çын харпăрлăхĕнчи трактор ял çыннин 60 сотка çинчи уттине çулнă чух курăк ăшĕнче комуфляж костюмпа выртнă çынна вилмеллех амантать. Çын мĕншĕн унта выртнă – следстви кăтартса парĕ.

Июлĕн 10-мĕшĕ. 16 сехет тĕлĕнче Кӳстерекре уйрăм çыннăн утă лаптăкне хăйĕн харпăрлăхĕнчи тракторпа çулнă чух хăрушсăрлăх правилисене пăсса тракторист косилкăна хăват паракан вала сӳнтермесĕр косилка патне пырса урине касса ярать.

Куратпăр тата техникăсăр паян малалла кайма май çуккине те ăнланатпăр, анчах техникăпа ĕçленĕ чух хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине манас марччĕ.

С. НИКОЛАЕВ,
патшалăх техника надзорĕн районти аслă инспекторĕ.

Официально

В Приложении к Моргаушской районной газете от 16 июля 2008 года печатается решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 15 февраля 2008 года № С-24/7 «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 01.12.2006 г. № С-15/2 «О районном бюджете Моргаушского района на 2007 год».

Юбилей

Саламлатпăр

Турай ял тăрăхĕнчи Тушкасси ялĕнчи **Мария Игнатьевна НИКОЛАЕВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.Татах та пирĕнпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Санăн умăнта çĕре çити пуç таятпăр, эсĕ пурăнсан тулăхрах та ырăрах.

Чун-чĕререн саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, Мăн Токшикри Терентьевсем, Муркашри Паргеева, Анаткасри Прокопьевсем, Алексеевсем тата Етĕрне районĕнчи Кузьминсем, Яковлевсем тата йышлă тăванĕсем.